Днигр пол

25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
26
ВЫРСАРНИКУН
98 (6033) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

1942 çулти майăн 1-мĕшне ирттермелли ЛОЗУНГСЕМ

1. Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ — рабочи класăн çапăçури вăйĕсене пăхса тухмалли кун! Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, нимĕççен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕрлешĕр!

2. Пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи мире пăсса, çĕршер миллион ĕççыннисене вăрçă вутне кĕртсе янă гитлерла империалист-разбойниксем тĕп пулччăр!

3. Нимĕççен фашистла захватчикĕсем-вăрăхурахĕсем, Европăри халăхсене чуралантаракан юнлă пусмăрçăсем, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсен ылханлă тăшманĕсем тĕп пулччăр!

4. Гитлерла империализма хирĕç кĕрешекен Европăри халăхсене салам! Европăри çĕршывсен патриочĕсем, хăвăра фашистла пусмăртан ирĕке кăларассишĕн кĕрешĕве çĕкленĕр! Гитлерла тиранине сирпĕтсе антарăр!

5. Пусмăрти тăван славянсем! Гитлерла империалистсене — славян халăхĕн вилĕмле тăшманĕсене хирĕç халăхăн таса вăрçине туса пыма çĕкленĕр! Сывă пултăр славян халăхĕсен кĕрешÿри пĕрлĕхĕ!

6. Гитлерла черносотенла пусмăр айĕнче хĕн куракан Германи ĕççыннийĕсем! Юнлă Гитлера тата унăн тарçисене сирпĕтсе антарăр!

Хăвăрăн тăван çĕршывăра чуралăхран ирĕке кăларăр!

7. Нимĕçсемпе итальянецсен вăрă-хурахла империализмне хирĕç ирĕклĕхшĕн тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пыракан Совет Союзĕн, Великобританин, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсен хĕçпăшаллă вăйĕсен кĕрешÿри союзĕ сывă пултăр!

8. Советсен тăван çĕршывĕшĕн Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем çапăçăва каяççĕ. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ!

9. «Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ пуринчен малтан çакăнта пулать: вăл захватчикла вăрçă мар, империалистла вăрçă мар, отечественнăй вăрçă, ирĕклĕхшĕн пыракан тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пырать» (Сталин).

10. Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Сирĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешмелли аслă миссие пурнăçа кĕртме тиврĕ. Çак миссие тивĕçлĕ пулăр, — нимĕç захватчикĕсен кĕтĕвĕсене аркатăр!

11. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Сире нимĕççен фашистла пусмăрĕ айĕнче хĕн куракан миллионшар совет çыннисем ирĕклĕхе кăларакансене кĕтнĕ пек кĕтеççĕ. Малалла, Хĕвеланăç еннелле! Совет çĕрне фашистла захватчиксенчен тасатăр!

12. Пирĕн хуласемпе ялсене çаратса тата юхăнтарса пĕтернĕшĕн, хĕрарăмсемпе ачасене асаплантарнăшăн нимĕççен фашистла мерзавецĕсене тавăрăр! Юншăн юн! Вилĕмшĕн вилĕм!

13. Юлташсем — красноармеецсем, командирсем, политработниксем! Çуркунне тата çулла нимĕççен фашистла вăрă-хурахĕсене хĕллехинчен те вăйлăнрах пыра-пыра çапăр! 1942 çул тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкмалли çул пулмалла! Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

14. Краснофлотецсем, Тинĕс-Çар Флочĕн командирĕсемпе политработникĕсем! Тăшмана вăйлăнрах çапăр! Карапсемпе çыранри артиллерирен тĕл персе тăшмана пĕтерсе пырăр!

Сывă пулччăр Совет морякĕсем!

15. Совет летчикĕсем — пирĕн тăван çĕршывăн соколĕсем! Тăшмана сывлăшра та, çĕр çинче те аркатăр!

Сывă пулччăр Совет летчикĕсем!

16. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Тăшмана хăюллăн пĕтерсе пырăр! Хамăрăн çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларăр!

Сывă пулччăр Совет танкисчĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем! Тăшманăн çирĕплетнĕ узелĕсемпе хирĕç тăмалли пункчĕсене аркатса пырăр! Тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырăр!

Сывă пулччăр Совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем!

18. Хĕрлĕ Çарăн пехотинецĕсем! Нимĕççен фашистла захватчикĕсене Хĕвеланăç еннелле хăвалăр, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырăр, çĕнтерсе илнĕ рубежсене вăйлăн çирĕплетсе хурăр!

Сывă пулччăр Совет пехотинецĕсем!

19. Хĕрлĕ Çарăн кавалерисчĕсем! Тăшман войскисен ăшне хăюллăн та тăтăклăн кĕрсе-кĕрсе кайăр, вĕсене Хĕвеланăçнелле пĕр чарăнмасăр хăвалăр!

Сывă пулччăр Совет кавалерисчĕсем!

20. Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет чиккисен шанчăклă хуралçисем!

21. Хĕрлĕ Çарăн гвардеецĕсем! Мухтавлă гварди ялавĕсене чыслăн тытса пырăр! Тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре яланах паттăрлăхпа хăюлăхăн примерне кăтартăр!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарăн чапне кÿрекенĕ — Совет Гвардийĕ!

22. Совет Союзĕн Геройĕсене тата Социализмла Ĕçĕн Геройĕсене — пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене мухтав!

23. Ленинграда паттăррăн хÿтĕлекенсене хĕрÿллĕ салам! Сывă пулччăр ленинградецсем — пирĕн çĕршывăн мухтавлă патриочĕсемпе патриоткисем!

24. Тăвансем — украинецсем, белоруссем, молдавансем, литовецсем, латышсем, эстонецсем, карелсем, вăхăтлăха нимĕççен фашистла мерзавецĕсен пусмăрĕ айне лекнĕскерсем! Партизанла кĕрешĕвĕн çулăмне вăйлатса пырăр, тăшман войскисен тылĕсене аркатăр, нимĕççен фашистла вăрă-хурахĕсене пĕтерсе пырăр, — эпир часах пыратпăр!

25. Партизансемпе партизанкăсем! Тăшмана вăйлăнрах çапăр! Нимĕççен фашистла захватчикĕсен тылĕнче халăх восстанийĕсене çĕклĕр!

Сывă пулччăр халăхшăн тавăраканĕсем — советăн хăюллă партизанĕсемпе партизанкисем!

26. Пирĕн çĕршыври халăхсен никам çĕмĕрейми туслăхĕ сывă пултăр!

27. Пирĕн çĕршыври рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин тăванла союзĕ сывă пултăр!

28. Фронт валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем хатĕрлекен предприятисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлĕр! Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ валли!

29. Танксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Боевой машинăсене туса кăларассине ÿстерĕр!

Çĕнĕ çĕнтерÿсем патнелле, танкостроитель юлташсем!

30. Авиаци завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Самолетсем туса кăларассине ÿстерĕр! Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах боевой машинăсем туса парăр!

31. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кăларассине ÿстерĕр! Фронтпа промышленность валли горючи ытларах парар!

32. Çĕркăмрăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Кăмрăк кăларассине ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пырăр! Фронтпа тыла кирлĕ чухлех топливо парар!

33. Совет металлургĕсем! Танксем, самолетсем, орудисем, пулеметсем, снарядсем тума металл ытларах парăр!

Çĕнĕ çĕнтерÿсем патнелле, металлург юлташсем!

34. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хальхи вăрçă моторсен вăрçи пулса тăрать. Самолетсем, танксем, автомашинăсем, карапсем тума çарпа флот валли моторсем ытларах парар!

35. Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсемпе зоотехниксем! Çуракине ăнăçлăн туса ирттерни фронтра пысăк çĕнтерÿ тунипе пĕр танах шутланать. Уйхирсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕр! Пысăк тухăçлă тырпулшăн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерессишĕн кĕрешĕр! Фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах тырпул, ашкакай, промышленность валли чĕртавар парса тăрăр!

36. Чугунçул транспорчĕн работникĕсем! Поездсене хăвăртрах çÿретĕр! Чугунçулсене пĕр чарăнусăр, тĕрĕс ĕçлеттерессишĕн кĕрешĕр!

Сывă пулччăр пирĕн железнодорожниксем!

37. Тинĕс флочĕпе юханшыв флочĕн работникĕсем! Çар грузĕ тиенĕ транспортсене фронт патнелле хăвăртрах илсе çÿрĕр! Фронтпа тыла ытларах та ытларах нефть, çĕркăмрăкĕ, металл, йывăç, тырпул турттарса парăр! Пурнăçа шеллемесĕр, тимлĕн ĕçлесе, гитлерла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшăр!

38. ССР Союзĕнчи гражданĕсемпе гражданкăсене пурне те çар ĕçне вĕрентни пирĕн оборонăна тĕреклетет. Совет патриочĕсемпе патриоткисем! Çар ĕçне вĕренĕр! Тăван çĕршыва хăюллăн хÿтĕлекенсем пулма хатĕрленĕр!

39. Хĕрарăмсемпе хĕрачасем! Арçынсен профессийĕсене вĕренсе алла илĕр, фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăрăр! Сывлăшран тапăннинчен тата химилле тапăнуран хÿтĕленес ĕçе, санитарипе çыхăну ĕçне вĕренĕр! Нимĕççен фашистла захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшăр!

40. Совет интеллигенцийĕ! Совет учреждениесенчи работниксем, инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, наукăпа искусство тата литература работникĕсем! Хамăрăн пĕтĕм вăйпа пĕлĕве нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе парар!

Сывă пултăр совет интеллигенцийĕ!

41. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем! Промышленноçпа ялхуçалăхне большевикла хăвăртлăхсемпе ура çине тăратăр! Фабрикăсемпе заводсене ĕçе ярăр! Çуракине организованно туса ирттерĕр!

42. Сывă пултăр комсомол — большевикла партин тĕрĕс помощникĕ! Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

43. Коммунистсемпе комсомолецсем! Нимĕççен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен пĕрремĕш речĕсенче пулăр!

44. Сывă пултăр пирĕн мухтавлă тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

45. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ — нимĕççен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕ!

46. Ленин—Сталин ялавĕпе—малалла, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма!

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ

Колхозсенче ĕç дисциплинине вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек çирĕплетмелле

Çĕршывăн кăнтăр районĕсенче çураки ĕçĕнче трактористсемпе трактористкăсем, колхозницăсемпе колхозниксем хăйсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Краснодар крайĕнчи Троицки МТС-ăн çамрăк трактористкисем питĕ лайăх ĕçлеççĕ. Çĕрлехи сменăра ĕçлекен Марченко трактористка СТЗ тракторпа 8 гектар вырăнне 7,8 гектар сухалать. Вăл 50 килограмм горючи перекетлесе хăварнă та ĕнтĕ.

Трактористка Антонина Колесник техникăллă культурăсем акмашкăн тавăн сухаласа ĕçре нормăра кăтартнă 2,9 гектар вырăнне 5-шер гектар сухалать.

Екатерина Линникăн хĕрарăмсенчен тăракан трактор бригади ВЛКСМ райкомĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне илмĕшĕн çул ĕнтĕ хăйĕн аллинчен вĕçертмесĕр тытса тăрать. Ĕçе тухсан малтанхи 15 кун хушшинче çав бригада кашни условнăй трактор пуçне 92 гектар çемçе суха сухаланă тата 503 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Çавăн пек примерсем нумай. Ĕçри хавхалану малта пыракан бригадăсемпе звеносене, ĕç хатĕрĕсемпе ĕç ресурсĕсем халь кăштах чакнă пулин те, ака планне кĕске срокра тултарса пыма тата ирттерсе тултарма май парать.

Анчах та çуркуннехи обстановка малта пыракан бригадăсемпе звеносене кăна мар, колхозниксен пĕтĕм массине вăя шеллемесĕр ĕçлеме хушать.

Халĕ, вăрçă вăхăтĕнчи условисенче, колхозри ĕç дисциплинин уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. «Фронтри пек ĕçлемелле» текен лозунг вăл промышленноçри предприятисемшĕн çеç мар, колхозсемшĕн те боевой лозунг пулса тăрать. Колхоз членĕсен ĕç дисциплинине чăннипех вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек çирĕплетмелле. Ялхуçалăхĕнчи ĕç ресурсĕсемпе халь ĕлĕкхинчен нумай туллинрех усă курас пулать.

Колхозсенче тăрăшса ĕçлемен çынсене, кахалсене, юлхавсене мирлĕ вăхăтра та чăтса тăма юраман пулсассăн, халĕ, отечественнăй вăрçă кунĕсенче, юлхавсене хирĕç вăйлăн кĕрешес пулать. Юлхавсем, начар ĕçлекен колхозниксем хăйсем тăрăшса ĕçлеменнипе колхоза çеç мар, государствăна та сиен кÿреççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пĕтĕм халăхăн чĕртаварпа продовольстви ресурсĕсене чакараççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстерес çинчен» йышăннă постановлени пысăк вырăн йышăнса тăракан постановлени пулса тăрать. Тăрăшса ĕçлемен çынсене хирĕç, юлхавсене хирĕç пыракан çав постановлени вăл колхозниксен массин питĕ пысăк пайĕн, хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи, фронт умĕнчи тивĕçлĕхне ырă кăмăлпа, таса чĕререн туса пыраканскерĕн, интересĕсемпе пĕтĕмпех пĕр майлăн пырать.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени вăл юлхавсене хыçа алпа тытма май парать.

Ĕçлеме пултаракан колхозниксене, ĕçкунĕсен обязательнăй минимумне нимĕнле сăлтавсемсĕрех ялхуçалăх ĕçĕсен тапхăрĕсенче ĕçлесе туманнисене суда параççĕ, судсен приговорĕсем тăрăх вара вĕсене колхозсенче юсанмалли ĕçре ултă уйăхчен ĕçлеттереççĕ, вĕсем ĕçлесе илекен ĕçкунĕсенчен 25 процентне çити колхоз валли тытса юлаççĕ.

Ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсене, ĕçкунĕсен обязательнăй минимумне çулталăк хушшинче тивĕçлĕ сăлтавсемсĕрех ĕçлесе туманнисене, апла вара общественнăй хуçалăхăн интересĕсене аякка пăрса хăваракансене колхозсенчен кăлармалла тата вĕсенчен çурт таврашĕнчи пахча вырăнĕсене туртса илмелле.

Сăмах кунта ĕçкунĕсен ÿстернĕ минимумĕ çинчен пынине манас пулмасть, çав ÿстернĕ минимума кашни колхозникĕн пĕр пăркаланса тăмасăр пурнăçламалла. Çакна пурнăçа кĕртнине вырăнти партипе Совет органĕсен пăхса тăмалла, çав органсен колхозсенче ĕç ресурсĕсемпе туллин усă курассишĕн кĕрешмелле. Пирĕн çакăн пек тумалла тăвас пулать: колхозниксен нумайрахĕш пайĕ малта пыракан колхозниксем ĕçлесе тăракан ĕçкунĕсем чухлĕ ĕçкунĕ тутăр. Колхозниксен нумайрахĕш пайĕ 1940 çултах çав минимумран ытларах ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Сăмахран, Узбек ССР-ĕнче çитĕннĕ колхозник, вăтамран шутласан, 234 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă, Иваново облаçĕнче — 260 ĕçкунĕ, Ярославль облаçĕнче — 301. Киров облаçĕнче — 310, Сталинград облаçĕнче — 306, Орджоникидзе крайĕнче — 315 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Çав вăхăтрах ĕçкунĕсен минимумне ĕçлесе туман колхозниксем те пулнă: Орджоникидзе крайĕнче çавăн пек колхозниксем 8 процент пулнă, Сталинград облаçĕнче— 7,5 процент, Киров облаçĕнче — 2,5 процент, Ярославль облаçĕнче — 4,5 процент, Иваново облаçĕнче — 9,5 процент, Узбек ССР-ĕнче — 12,5 процент пулнă. Çав сахалтарахăшĕ нумайрахăшĕн ĕçне пăсса тăни паллă мар-и вара?

Миллионшар çитĕнсе çитмен ачасем— колхозниксен çемьисен членĕсем — сÿрере çÿреççĕ, акнă çĕрте, хирсене тасатнă çĕрте, тислĕк турттарнă çĕрте тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсенче те ĕçлеççĕ. Колхозри çамрăксен ĕçĕпе халĕ ĕнтĕ йĕркеллĕрех усă курмалла. Çитĕнсе çитмен ачасем валли, 12 çултан пуçласа 16 çула çитнисем валли — колхозниксен çемьисен членĕсем пулса тăраканскерсем валли — обязательнăй минимум тунă, çулталăкра вĕсен 50 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе тумалла. Çав çитĕнсе çитмен ачасем чылай енĕпе Хĕрлĕ Çара кайнă ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вырăнне тăрса ĕçлеме пултарĕç.

Çитĕнсе çитмен ачасене пурне те вăхăтра ĕç кĕнекисем парас пулать. Çитĕнсе çитмен ачасем ĕçлесе тăвакан ĕçкунĕсене уйрăммăн шута илсе пырас пулать. Çакă вăл çитĕнсе çитмен ачасен ĕçкунĕсене, хăшпĕр колхозсенче тĕрĕс мар тунă пек, килхуçин кĕнеки çине çырса пырассине е нимĕçта та çырманнине пĕтерсе лартĕ. Ĕлĕкхи пек туни вăл çитĕнсе çитмен ачасен ĕçлес кăмăлне чакарса пынă.

Правительствăпа парти колхозсенче ĕçкунĕсен минимумне ÿстереççĕ тата ĕçкунĕсен минимумне ĕçлесе туман колхозниксене ответ тыттарма ирĕк параççĕ; çав вăхăтрах вĕсем тата колхозсене ĕç вăйĕн çĕнĕ ресурсĕсене тупса параççĕ. Ун çинчен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Хуласемпе ялсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлемешкĕн колхозсене, совхозсене тата МТС-сене яма мобилизацилемелли йĕрке çинчен» йышăннă постановлени калаçа парать.

Хуласемпе ялсенчи çынсене ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме чи кирлĕ вăхăтсенче яни колхозсене темиçе миллион ĕçлекен çын хушса парать. Çак ĕç вăйĕпе туллинрех те тухăçлăнрах усă курни кирлĕ.

Пĕлтĕрхи опыт çакна кăтартса парать: çĕрĕç органĕсемпе колхозсен руководителĕсем хула çыннисемпе усă курассине тĕплĕн шухăшласа тата йĕркеллĕ тунă çĕрте ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулнă, тырра вăхăтра пуçтарса кĕртнĕ, тырă тăкакаланса пĕтмен. Хăшпĕр районсенче вара йăлтах урăхла пулнă: колхозсене хула çыннисем пулăшнă пулсан та, тырра пуçтарса кĕртес ĕçе вăраха янă, тырă тăкакаланкаланă. Хула çыннисен ĕçĕпе унта сахал усă курнă тата ăна начар организациленĕ.

Çакăн пек йăнăша урăх тума юраман. Çĕрĕç органĕсемпе колхозсен руководителĕсен хушса паракан ĕç вăйĕпе усă курмалли плана тĕплĕн шухăшласа хатĕрлемелле, вĕсене хула çыннисен ĕçĕ чи пысăк результатсем памалла туса хатĕрлемелле. Колхозсен руководителĕсем вĕсене миçе çын хушса парассине малтанах пĕлсе тăмалла, миçе çын ярассине шута илсе вара вĕсене кĕтсе илме хатĕрленмелле, вĕсене пурăнмалли çуртсем тупса памалла. Пĕрле апатланас ĕçе йĕркелемелле, килнĕ çĕнĕ çынсене ĕçри нормăсемпе, ĕçшĕн тÿлемелли йĕркепе т. ыт. те паллаштармалла.

Колхозниксене ялхуçалăх ĕçĕсенче тата, пĕлтĕрхи пекех, шкул ачисем, вузовецсем, учительсем нумай пулăшма пултараççĕ.

Хула çыннисене пуринчен ытла ялхуçалăх ĕçĕсем ытла нумай чухне, уйрăмăнах акнă тырра пăхса çитĕнтернĕ вăхăтра тата тырра вырса пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра мобилизацилемелле.

Кăçалхи çул, çуркунне вăрăма кайнипе тата тапхăр-тапхăр сивĕ пулнипе, çавăн пекех тата Союзăн чылай пысăк территорийĕ çинче çĕре çуркунне сухаланипе, акнă тырра пăхасси, çав шутрах ăна çумласси те, пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

Сивĕ çуркунне культурăллă курăксене ÿсме парса тăрать, çапла майпа хирĕсенче çумкурăксем ĕрчеççĕ. Çавăнпа та калчасем тухсассăнах хирсене çумласа, çумкурăксенчен тасатса тухас пулать. Ку çеç сахал-ха. Çуркуннен малтанхи кунĕсенчен пуçласах çумкурăксене çул хĕррисенче, чиксем çинче пĕтерсе тăкма тăрăшмалла, çул хĕррисемпе чиксем вĕсем час-часах ялхуçалăхне сиенлекенсене ĕрчетсе сарăлса выртмасем пулса тăраççĕ.

Курăксене пăхса ÿстересси, çумласси — нумай ĕç ыйтакан япала. Çумсем пусса илнипе тырă нумай сухалма пултаракан вырăнсенче çум çумлама хула çыннисене, чи малтан çамрăксене, шкул ачисене мобилизацилесе ярас пулать.

Хирти ĕçсене ĕçлеме хуласенчен пыракан ĕççыннисене чи малтан ĕç нумай бригадăсемпе звеносенче, çав нумай ĕçе туса çитерме ĕлкĕреймен бригадăсемпе звеносенче ĕçлеттерес пулать.

Хула çыннисене хăйсен уйрăм бригадисем туса та ĕçлеттерме пулать, пуринчен ытла утă пуçтарас, авăн çапас ĕçсем пек ĕçсене тунă çĕрте çапла тума пулать, анчах та çав бригадăсене ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме хăнăхнă опытлă работниксем ертсе пырсан çеç çапла тума пулать.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме пĕлмен хула çыннисенчен уйрăм бригадăсемпе звеносем туни йăнăш пулнă пулĕччĕ. Опытлă работниксем производство тĕлĕшпе яланах пулăшса тăмасан, çавăн пек бригадăсемпе звеносенче ĕç тухăçлăхĕ начар пулнисĕр пуçне тата ĕç пахалăхĕ те чакма пултарать. Колхозăн звенисемпе бригадисем тăрăх уйăрса салатсанах, çав çынсемех ялхуçалăх ĕçĕн техникине хăйсемпе юнашар тăрса ĕçлекен колхозниксенчен часах вĕренсе çитме пултараççĕ.

Кăçал ялхуçалăх ĕçне шкул ачисем, вузовецсем тата служащисем (пуринчен ытла çĕрĕç пайĕсенче ĕçлекен служащисем) миллион çурă çын ытла вĕренсе пĕтернĕ; çак вĕренÿ хулари ĕççыннисен сарлака массисене колхозсен хирĕсенче пĕлтĕрхинчен ăнăçлăнрах ĕçлеме май парĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен, МТС-семпе çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) постановленийĕ çине ĕç дисциплинине çирĕплетнипе, ĕçре тата ытларах хавхаланса ĕçленипе, çуракинче социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса янипе ответлес пулать.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерни фронтра тунă пысăк çĕнтерÿпе пĕрех. Колхозниксен, МТС-семпе çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен, çамрăксен тата ялхуçалăх ĕçне явăçтарнă хула çыннисен çав çĕнтерĕве тумашкăн мĕн кирлине пурне те тăвас пулать.

И. БЕНЕДИКТОВ.
СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç ăнăçлăн вĕçленчĕ

ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ пĕлтерни

Çак çулти апрелĕн 14-мĕшĕнче 10 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне, апрелĕн 23-мĕшне кĕртсе шутласан, урăхла каласан 10 кун хушшинче, 12 миллиард та 860 миллион та 831 пин тенкĕлĕх сарнă. Заема йышăннă суммăран 2 миллиард та 860 миллион та 831 пин тенкĕлĕх ирттерсе вырнаçтарнă.

Çавăнпа та ССР Союзĕн Наркомфинĕ, СССР Совнаркомĕ панă кăтарту тăрăх, Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне çырăнса илессине 1942 çулти апрелĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те чарма распоряжени панă.

Заема Чăваш республикинче сарнин итогĕсем

Республикăра Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç нихçанхинчен ăнăçлăн иртрĕ. Апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне заема пĕтĕмпе 63.305.000 тенкĕлĕх, бюджетпа палăртнипе танлаштарсан 133 процент вырнаçтарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 24.537.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 28.779.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.351.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕççыннисем заема 6.338.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Районсем пурте заема бюджетпа палăртнинчен чылай ирттерсе сарчĕç.

Икĕ хут ирттерсе çырăнчĕç.

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 25-мĕш. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем хушшинче çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç нихçанхинчен ăнăçлăн иртрĕ. Колхозниксем заема бюджетпа пăхнинчен икĕ хут ирттерсе çырăнчĕç, подписка укçине кĕске срокра — 10 кун хушшинче тÿлесе татрĕç.

Çĕнĕ заема сарас тĕлĕшпе уйрăмăнах Чуманкасси, Турай, Чемей, Шĕмшеш ялсовечĕсем кăтартуллă ĕçлерĕç. Вĕсем заем сарас плана 200—250-шар процент тултарса, укçине те иккĕ-виç кун хушшинчех пуххса çитерчĕç. Кунти комсодсен председателĕсем П. Никитин, В. Смирнов, М. Степанов тата И. Сотинов юлташсем массăллă ăнлантару ĕçне куллен туса пычĕç.

Районри комсод председателĕ Н. Ятманов юлташ вылявсем тухнине тĕрĕслес ĕçе организацилерĕ. Юлашки тиражсенче районра 5.373 тенкĕлĕх вылявтухнине палăртнă.

С. ИЛЬИН.

МТС çуракине тухма хатĕр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, апрелĕн 23-мĕш. (Телефонпа). Кăçалхи çураки вăрçă обстановкинче пулса иртет. Çавăнпа çак çуракине пирĕн уйрăмах пысăк пахалăхпа туса ирттермелле.

Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцийĕ кăçалхи большевикла çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ. Социализмлă ăмăртăвăн вăйĕпе анлăн усă курса, МТС тракторсене правительство кăтартса панă срокран 15 кун маларах юсаса çитерчĕ. Паянхи куна трактор семпе плугсене тата сеялкăсене çуракинче ĕçлеме колхозсене çитерсе тăратнă. Çунтармалли тата сĕрмелли материалсене çуракине тума çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă. 835 кубометр чурка хатĕрленĕ. Касса хатĕрленĕ чурка хисепĕ МТС-ри газогенераторлă тракторсене çулталăк хушши ĕçлеме çитет.

Урапаллă тракторсем валли ушрипительсем тунă. Трактор бригадисем çумне учетчиксем çирĕплетнĕ, вĕсемпе икĕ кунлăх курс туса ирттернĕ. Чурка турттарма бестаркăсем çителĕклĕ. Кашни бригада валлиех пурăнмалли будкăсем тунă, вĕсенче пурăнмалли условисене туса çитернĕ.

Машинно-тракторнăй станцин трактористсем çителĕклĕ. Курсран пурĕ 48 тракторист вĕрентсе кăларнă. Кăçалхи çуракинче колхоз уйхирĕсене тракторпа ĕçлеме 22 хĕрача тухать. Трактористсемпе трактористкăсем пурте Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Халĕ вĕсем машинăсене татах та тепĕр хут тĕрĕслеççĕ. Вак-тĕвек çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшаççĕ.

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи трактористкăсем Пĕтĕм Союзри трактористкăсен социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Трактористка Мамуткина ХТЗ-НАТИ тракторпа кăçал 1050 гектар, Иванова, Магаськина, Пономарева трактористкăсем У—2 тракторпа 650-шар гектар сухалама обязательство илчĕç. А. Пакаева, Д. Крупинова трактористкăсем 650-шар гектар сухалама пулчĕç.

Л. ЗАХАРОВ,
МТС политотделĕн начальникĕ.

КЛЕВЕР АКМА МАССĂЛЛĂН ТУХРĔÇ

ЙĔПРЕÇ, апрелĕн 25-мĕш. (Телефонпа). Паян районри колхозсем клевер акма массăллăн тухрĕç. «Правда», «Красный Октябрь», «Коминтерн» колхозсем клевер акас плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Ытти колхозсенче те клевер акас ĕç малалла пулса пырать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн çуракине вăхăтра ирттерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисем çинчен йышăннă постановленине пурнăçлас йĕркепе ыйтупа районра колхоз председателĕсен икĕкунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Çуракине лайăх организацилесе ирттерес ыйтупа паян ялсовечĕсен председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Районри колхозсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумĕ çинчен» йышăннă постановление сÿтсе яваççĕ. Партипе правительствăн постановленине колхозниксем пур çĕрте те ырласа йышăнаççĕ.

Ф. АРТЕМЬЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче фронтра нимĕнле палла улшăнусем пулман.

Апрелĕн 23-мĕшĕнче нимĕçсен 25 самолечĕ пĕтерĕнĕ тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Апрелĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем турттаракан 20 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 6 вагоне, 6 полевой орудие пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, [illegible]

Ленинград фронтĕн уйрăм участокĕсенче [illegible]

[illegible]

Калинин облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче [illegible] партизансем [illegible]

[illegible]

Снайпер Малов юлташ противникăн [illegible]

[illegible] асăрхана. Тинкеререх пăхсан, Малов юлташ çав салтак вăл макет пулнине, çав макетпа хÿтĕленсе икĕ салтак, хытă пĕшкĕнсе, блиндажри шыва юхтарса кăлармашкăн канав чавнине пĕлнĕ. Тăшманăн чеелĕхне пĕлсен, снайпер икĕ хут персе икĕ салтакне те вĕлернĕ. Çав вилнĕ салтаксем патне тата 4 салтак пыма хăтланнă, анчах та совет стрелокĕ тĕл персе вĕсене те вĕлерсе пĕтернĕ.

[illegible] 10 çултан пуçласа 12 çула çитичченхисене — çар предприятийĕсенче ĕçлеттерме мобилизациленĕ. Гитлеровецсем вĕсем валли казармăри пек, каторгăри пек йĕрке туса хунă. 10 çулти ачасене вĕсем талăкра 12—14-шар сехет ĕçлеттереççĕ. Ачасем мĕскĕн, выçă пурнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсем куннe пĕр чашăк шĕвĕ шÿрпе те 200 грамм суррогатлă çăкăр илеççĕ.

Лорд Бивербрук выступленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Хаçат издательсен Америкăри обществин» [illegible] лорд Бивербрук [illegible]

[illegible]

тактика мастерĕ, вăл тăшмана аркатăтех. Вăл наступлени туни оборонăн чи лайăх форми пулса тăрать тесе шухăш[illegible]

[illegible] вербрук, — вăрçă часах чарăнмĕ-ха, анчах хуть мĕнле пулсан та эпир хамăр çĕнтеретпĕрех тесе шанатпăр».

Англи авиацийĕ Германи çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германи территорийĕ çине вĕçсе кайнă. Вĕсем Германин Балти тинĕсĕнчи Росток порчĕ çине тапăннă.

Противникăн йышлă мар самолечĕсем çав каçах Англин кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав самолетсенчен иккĕшне персе антарнă. Пăрахнă бомбăсем чылай пунктсенче паллă сиенсем кÿнĕ. Вилнисем, аманнисем пур.

Франци завочĕсенче Германие хирĕçле саботаж туса пыни

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Безансонри (Францин оккупациленĕ зони) «Дуж» завочĕ халĕ гитлеровецсен заказĕсем тăрăх снарядсем тăвать. Çак кунсенче çав заводăн дирекцийĕпе завод кăларса тăракан продукцие йышăнса тăракан нимĕçсен комиссийĕ хушшинче конфликт тухса кайнă. Сăлтавĕ çакăнта: завод юлашки икĕ уйăх хушшинче кăларнă мĕнпур снаряд пĕтĕмпех юрăхсăрри палăрнă. Çакă вăл çав заводра саботаж ĕçне анлăн организацилесе яннинчен килнĕ. Çакăн пирки халĕ гестапо допроссем тăвать.

Совет Союзĕ тăрăх

▲ Астраханьре Советсен VII съезчĕ ячĕпе тăракан промысла кооперацин артелĕ вырăнти чĕртавартан шăрпăк (спичка) тума тытăннă. Шăрпăк коробкине «Красный факел» артель туса парать, вăл ăна картонран тăвать.

▲ Ленинград облаçĕн районĕсенче купăста типĕтмелли тата тăварласа йÿçĕтмелли çĕнĕ пунктсем организацилеççĕ. Çуркуннепе ирех пулакан кăй тĕллĕн ÿсекен çырласемпе курăксене: юр айĕнчен тухнă çĕр улмине, ăлăнманах пулакан кĕтмел çырлине, кăшкар утине тата ыттине те тасатса хатĕрлеме тытăнаççĕ.

▲ Кемерово хулин апат-çимĕç комбинатĕ çырла хывăхĕнчен питех те тутлă чей хатĕрлесе кăларма пуçланă. Апрель вĕçĕнче-и е май пуçламăшĕнче-и—магазинсемпе столовăйсем пирвайхи тонна çырла чейĕ туянаççĕ.

Курсран 20 тракторист вĕренсе тухрĕ

ЕТĔРНЕ. Апрелĕн 22-мĕшĕнче машинно-тракторнăй станци организациленĕ курсран 20 тракторист вĕренсе тухрĕ. Çĕнĕ трактористсем хушшинче 10 çынĕ хĕрачасем. Ядровкин («Правда» колхозран,) Казанбаева (Киров ячĕпе тăракан колхозран) трактористсем курсран «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

А. КРАСНОВ.

Ăмăрту результачĕсем

КАНАШ, апрелĕн 24-мĕш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри стахановла бригадăсем Май уявĕ умĕнхи ăмăртура лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартсаççĕ. Журба юлташăн бригади кулленхи заданисене икĕ хут ирттерсе тултарать. Столярсен Кауровпа Михайлов юлташсем ертсе пыракан бригадисен ĕç тухăçлăхĕ те питех кая мар.

Уяв ячĕпе илнĕ обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе çамрăксен фронтовой бригадисем малта пыраççĕ. Чернухин юлташăн фронтовой бригади хĕйĕн çине илнĕ обязательствăна çак кунсенче ытлашшипех тултарчĕ. Капелюх юлташăн бригади те обязательствăна тултарса уявччен татах 3 вагон юсама пулчĕ.

Г. СОРОКИН.
Заводри партбюро секретарĕ.

Кахалланса ларни халĕ килĕшмест

СĔНТĔР, апрелĕн 24-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Сĕнтĕр ялсоветĕнче ултă колхоз. Калинин колхоз çумĕнче икшер агитатор ĕçлет. Вăл шутран ВКП(б) членне Астров юлташа Чкалов ячĕпе тăракан колхоз çумне агитациллĕ-массăллă ĕçе ертсе пыма çирĕплетнĕ. Вăл çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе массăллă ăнлантару ĕçне февраль уйăхĕнчех пуçланă. Агитациллĕ ĕçе пуçлаччен, колхоз мĕн таран çуракине хатĕррине тĕрĕслесе тухса, унăн результачĕсене актив канашлăвĕнче сÿтсе явнă. Тĕрĕсленĕ вăхăтра çитменлĕхсене пĕтерсе пынă. Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттересси çинчен тата кулленх тĕл пулакан практикăллă ыйтусемпе висĕ пуху туса ирттернĕ. Астров юлташ колхозниксен пухăвĕнче Калинин юлташ Мускав облаçĕнчи комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕнче туса каланă сăмаха тата çурхи уйхир ĕçĕсем çинчен çырнă статьяна, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозсенчи çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлени тĕплĕн ăнлантарса панă. Апрелĕн 20-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обком бюровĕ «1942 çулти çуракине вăхăтра ирттерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисем çинчен» тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановлени сÿтсе-яврĕç. Пухура колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительство йышăннă постановленисене пĕр кăмăллă пулса ырларĕç.

— Пирĕн упăшкасем аслă отечественнăй вăрçăра çапăçаççĕ. Пирĕн пуян тырпул туса илсе вĕсене лайăх тăрантармалла. Кахалланса ларни халĕ килĕшмест. Тăрăшсан 200 ĕçкунĕнчен кая мар тăватпăр,—тет Васса Лапашова. О. Любимова колхозница иртнĕ çулта 400 ĕçкунĕ тунă, кăçал 500 ĕçкунĕ тума пулчĕ. Пухура начар ĕçлекенсене те критиклăрĕç. Ольга Сидякова колхозница иртнĕ çулта пурĕ те 12 ĕçкунĕ, Евдокия Горшкова 60 ĕçкунĕ çеç тунă.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз çуракине тухма хатĕр. Çуллахи ĕç вăхăтĕнче пĕрлешсе апатланма кĕрте, пăрçа çăнăхĕ, апи-какай, çу хатĕрлесе хунă.

Г. АКИМОВ.

Германин ялхуçалăхĕ юхăнса пыни

Германире продовольстви çавтери çитми пулнипе, гитлеровецсем Германин ялхуçалăхĕ çине уйрăмăнах тимлĕн пăхма тытăннă. Ялхуçалăх ĕçĕ кунта калама çук япăх пырать. Выльăх-чĕрлĕхсен шучĕ, апат çуккипе, питех те чакнă. Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем çитмеççĕ.

Гитлерла влаçсем Германири хресченсене ытларах та ытларах çаратаççĕ. Ялсенче 600 пин чиновник ĕçлет. Вĕсем кашни килĕрен мĕн чухлĕ продуктсем памаллине палăртаççĕ тата çав продуктсене панипе паманнине тĕрĕслесе тăраççĕ. (ТАСС).

Кăнтăр-Африка Союзĕ Виши правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытса тăма пăрахнă

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Преторирен пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр-Африка Союзĕ Виши правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытса тăма пăрахнă.

Ирĕке кăларнă колхозсене тăванла пулăшу

ЧКАЛОВСКОЕ. (Хамăр корр., телефонпа). Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă районсемпе облаçсене тăванла пулăшу параççĕ. Кивĕ Катекри «Малалла» колхоз 300 пăт вăрлăхлăх тырă, «Маяк», «Çăлтăр» колхозсем те 300-шер пăт тырă ярса пачĕç. Нумаях тулмасть Кивĕ Ахпÿртри «РОКК» колхоз членĕсем (колхоз председателĕ Картин юлташ) ирĕке кăларнă колхозсем валли уйăрнă 14 центнер тырра Канаш станцине леçсе пачĕç. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсемпе облаçсенчи колхозсене районри колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем пурĕ 1812 пăт вăрлăхлăх тырă уйăрса панă. **П. НИКОЛАЕВ.**

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Апрелĕн 23-мĕшĕнче Куйбышев хулинче пулса иртнĕ пресс-конференцире Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ ютçĕршыв корреспонденчĕсем панă ыйтусем çине ответленĕ.

Корреспондентсенчен пĕри: совет резервĕсем çинчен эсир пире мĕнле те пулсан сведенисем пама пултараймастăр-и?—тесе ыйтни çине ответлесе, Лозовский юлташ çапла каланă:

Германин пропаганда министерствине «пичет» отделĕ 1941 çулти сентябрьпе октябрь уйăхĕсенчех ĕнтĕ совет çарĕсене «пĕтерсе тăкнă» тенине тата Германи халăхĕпе тĕнчери обществăллă шухăша совет резервĕсем пĕтсе çитнĕ тесе ĕнентерме çине тăрсах хăтланнине шута илес пулсан, 1941 çулти декабрĕн 6-мĕш хыççăн пулнă событисем пурте тĕлĕнмелле ĕçсем, ăнлантарма çук ĕçсем пулса тăнине йышăнас пулать. Анчах тĕлĕнмелле ĕçсен вăхăчĕ иртнĕ ĕнтĕ, çакăнтан вара акă мĕн тухса тăрать: Геббельспа Дитрих Германи халăхне пăтраштарса ярас тата ăсĕсене ăнлантарас тесе суйса пурăннă. Германия тупă какайне Италирен, Румынирен, Венгрирен, Финляндирен тата Словакирен сăптăрса илет пулинте, Германирен килекен юлашки хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тунă питех те пысăк çухатусене витес тесе, Германи хăйĕн пĕтĕм вăйне пухма тăрăшать. Икĕ çамрăк ăрăва мобилизациленисĕр пуçне, Германия производствăри 500 пине яхăн рабочисене мобилизацилесе Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ячĕ. çакна май Германири çар завочĕсенче ĕç вăйĕ çителĕксĕрри ăйăлăн палăрма пуçларĕ, ирĕксĕрлесе мобилизациленипе тата хăйĕн союзникĕсене пĕснипе Германие çав предприятисенче ĕçлеме ютçĕршыв рабочийĕсене 2,5 миллион çынна хăваласа пухни те пулăшмарĕ.

Германия хăйĕн резервĕсене пĕтĕмĕшпех шăлса пухнă, вăл пĕтĕм Европа тăрăх чупса çÿресе тата террорпа хăратса хăйĕн союзникĕсенчен тупă какайĕ илет, çав вăхăтрах Совет Союзĕ хăйĕн территорийĕсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешÿре хăйĕн вăйĕсемпех çaпăçать. Арктикăран пуçласа Хура тинĕс патне çити тăсăлакан пĕтĕм фронтра Германипе унăн мĕнпур хÿрешкисен хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç кĕрешсе, Совет Союзĕ ывăнма пĕлмесĕр тата пĕр чарăнмасăр вăйлă çапăçусем туса пырать.

Противник резервĕсемпе пирĕн резервсен çапăçури пахалăхне танлаштарнă чухне çакна та манса хăварма юрамасть: совет резервĕсем тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçакан тата моральпе политика енĕпе пĕтĕçнĕ пĕтĕм совет халăхĕн пулăшăвĕ çине таянакан патриотсенчен тăраççĕ, çав вăхăтрах гитлерла захватчиксемпе вĕсен тарçисен резервĕсем мораль енĕпе пăсăлса кайнă тата Хĕрлĕ Çарăн вăйне хăйсен ĕнси çинче туйса курнă çынсенчен тăраççĕ, вĕсен хыççĕнче юхăнса пĕтнĕ тата лăпкă мар тыл тăрать.

Тепĕр корреспондент: Геббельс, Лей тата ыттисем те юлашки вăхăтра хăйсен халăхĕн тарăхăвне хирĕç тухса каланине эсир мĕнпе ăнлантарса паратăр?—тесе ыйтни çине ответлесе, Лозовский юлташ çапла каланă:

Геббельс, Лей тата ыттисем те юлашки вăхăтра нимĕçсен тарăхăвне хирĕç тухса каланисем, нимĕç руководителĕсем халăха хăратма пăхнисем Германи халăхĕн анлă массисен ăнланăвĕнче пысăк улшăнусем пулса иртнине кăтартса параççĕ. Германин выçăхса çитнĕ, юхăнса кайнă тата вăйсăрланса юлнă халăхĕ куллен кунах питех те пысăк йывăрлăхсем тÿсет, Гитлер пĕтĕм тĕнчене çĕнтерсе илме палăртса тунă ăссăр плансене пула çав йывăрлăхсем Германи халăхĕ çине ÿкеççĕ. Çав ăссăр плансемшĕн Германи халăхĕ ĕнтĕ хăйĕн çамрăк çыннисен миллионшар пурнăçне парса, анлă массăсен выçă пурнăçĕпе тата чухăнлăхĕпе тÿлерĕ. Чăн та, пуян хуçасемпе вĕсен гитлерла хÿрешкисен пĕчĕк ушкăнĕ халăха чухăнлантарса çĕршер миллион пухса илчĕ, анчах шăпах çакă ĕнтĕ нимĕç обывателĕн «тарăхăвне» вĕçне çитиех çивĕчлентерсе ярать.

Çак кампани Германи тылĕ юхăнса çитни, ывăнни, пăйкăшни çинчен тата вăтам нимĕçĕн нервĕсем пăсăлса кайни çинчен кăна мар каласа парать, вăл çaвăн пекех Гитлерпа унăн геббельсĕсен тата лейĕсен нервĕсем йĕркеллĕ марри çинчен те каласа парать. Ĕç, паллах, тарăхура тата нервсем пăсăлнинче мар. Çав кăнттам выльăхсем лăпкă та кăмăллă пулмалли çинчен калаçни кулăшла. Ĕç çакăнта пулать: фашистсем «тарăху» тата «нервсем пăсăлни» тесе хаклакан явленисем Германи халăхĕ хăйне вилĕм патне илсе пыракансене хирĕç протестленине кăтартса параççĕ. Ку вăл чечекĕ кăна-ха, çырлисем малалла пулĕç.

Корреспондентсенчен пĕри: Лаваль Виши правительствин пуçлăхĕ туса хунине эсир мĕнле хаклатăр?—тесе ыйтни çине Лозовский юлташ çапла ответлерĕ:

Франци территорин пĕр татăкĕнче хăшпĕр вăхăт хушши «никама пăхăнман» правительствăн ĕмĕлкине сыхласа усраса, нимĕçсем çав вăхăтрах вăл правительствăран хăйсем мĕн илес тетине пурне те илсе тăчĕç (оккупациленĕ тата оккупацилемен Францири çар завочĕсем Германи çарĕ валли ĕçлени, патриотла движение хирĕç Виши правительствипе оккупациллĕ влаçсем пĕрле кĕрешни, Виши правительстви урлă дефицитлă таварсемпе продовольстви илсе тăни, оккупацилемен Франципе унăн колонийĕсем витĕр англичансен хирĕç кĕрешме войскăсем ярса тăни т. ыт. те). Нимĕçсем халиччен Франци флочĕпе Францин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи базисене хăйсен аллине илеймерĕç пулсан, çакă вăл Дарланпа унăн компанийĕ тăрăшнинчен мар, Франци матросĕсем-патриочĕсем çар суднисене нимĕçсене паричченех вĕсене шыва путарма хатĕр тăнинчен килнĕ.

Франци территоринче те тата унăн тулашĕнче те Францие ирĕке кăларассишĕн пыракан движени ÿснинчен хăраса ÿкнĕ гитлеровецсем Францин оккупацилемен пайне вĕçне çитиех фашизацилеме йышăнчĕç, çавăнпа та Вишири суя правительствăн пуçне хăйсен çĕр процентлă тÿрĕ агентне Лавале лартрĕç, вăл ĕнтĕ хăйĕн нимĕç хуçине юрас тесе пурне те тăвĕ. Çак условисенче те мĕнле «никама пăхăнса тăман» правительство çинчен тата Виши никама пăхăнса тăман политика тытса пырасси çинчен никам та калаçма хăюлăх çитереймĕ. Виши «никама пăхăнса тăманнин» ĕмĕлкине тăрă шыв çине кăларса пĕтерсе тăкнă.

Корреспондентсенчен пĕри: фашизма хирĕçле комитетсен ĕçĕсем çинчен тата вĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен эсир пире хăшпĕр сведенисене пама пултаратăр-и?—тесе çырса панă ыйту çине ответлесе, Лозовский юлташ çапла каланă:

Хальхи вăхăтра ССР Союзĕнче фашизма хирĕçле 5 комитет пур: 1. Мĕнпур славянсен комитечĕ, 2. Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕçле комитечĕ, 3. Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕçле комитечĕ, 4. Ученăйсен фашизма хирĕçле комитечĕ тата 5. Еврейсен фашизма хирĕçле комитечĕ. Çак комитетсем пурте ССР Союзĕ çине Гитлер ултавлăн тапăннă хыççăн тата фашистла захватчиксем хĕçпăшалла усă курса пĕтĕм тĕнчене хăйсене пăхăнтарма ăссăр плансем тунă хыççăн пуçланса кайрĕç.

Гитлер хăйĕн умне славянсен пĕр пайне пĕтерсе тăкас, тепĕр пайне вара чурасем туса хурас тĕллев лартрĕ. Çaвăнпа та славян халăхĕсем Гитлера, унăн тарçисене тата вăл туса хунă системăна пĕтерсе тăкма пĕрлешнинчен тĕлĕнмелли çук.

Гитлер ĕнтĕ Германири тата ытти çĕршывсенчи миллионшар хĕрарăмсене тăлăх тăратса хăварчĕ, вăл хĕрарăмсен миллионшар ывăлĕсене туртса илчĕ тата хĕрарăмсене пĕр чĕнмесĕр ĕçлекен чурасем туса хурасшăн. Çавăнпа та пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем хăйсене хĕн-хур кÿрекенсене, ачасене выçă усракансене хирĕç, чухăнлăха хирĕç, гитлерла пусмăрçăсене хирĕç пĕрле кĕрешме пĕтĕçнинчен тĕлĕнмелли çук.

Пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăрассишĕн туса пыракан хăйĕн вăрçисемпе Гитлер пĕтĕм тĕнчери çамрăксене вĕлерсе пĕтерсе пырать. Çавăнпа та мĕнпур çĕршывсенчи çамрăксем Гитлера çĕмĕрсе тăкас тата çамрăк ăрăва пĕтерсе тăкма парас мар тесе пĕрлешнинчен тĕлĕнмелли çук.

Гитлер наукăпа хăй майлă усă курать, тĕрĕсрех каласан, вăл этемлĕхе нумай çĕршер çуллăха каялла таварас тата этемлĕх генийĕ çĕнтерсе илнисене пурне те пĕтерсе тăкас, ытти çĕршывсене Германи фашизмне пăхăнтарас тесе наукăпа усă курать. Çавăнпа та мĕнпур çĕршывсенчи ученăйсем наукăпа культурăн чи тискер тăшманне — Гитлера тата унăн тарçисене пĕтерсе тăкма Совет Союзне, Англие тата Пĕрлешÿллĕ Штатсене пулăшас тесе пĕрлешнинчен тĕлĕнмелли çук.

Гитлер хăй умне еврей халăхне пĕтерсе тăкас задачăна лартрĕ тата вăл задачăна хăй оккупациленĕ çĕршывсемпе районсенче пурнăçа кĕртсе пырать, еврей халăхне пĕр çын юлмиччен вĕлере-вĕлере пĕтерет. Çавăнпа та Гитлерăн тата ытти фашистла упăтесен, хăйсене аслă раса тесе каппайканскерсен, юнлă ĕçне пĕтерсе тăкма Совет Союзне, Англие тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене пулăшас тесе еврейсем фашизма хирĕçле комитет тунинчен тĕлĕнмелли çук.

Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, çак комитетсем пурте, пĕтĕм этемлĕхе хăратса тăракан хăмăр чумана хирĕç кĕрешÿ сарса ярас тесе, Англири, Америкăри, Канадăри тата оккупациленĕ çĕршывсенчи хăйсем майлă çынсемпе пуринпе те тачă çыхăну йĕркелесе пыраççĕ.

Ясли руководителĕсен курсĕ

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 24-мĕш. (Телефонпа). Мартăн 24-мĕшĕнче районри сывлăх пайĕ колхозсенчи яслисем валли руководительсем хатĕрлес шутпа пĕр уйăхлăх курс уçрĕ. Паян курс хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Курсран пурĕ 22 хĕрача ясли руководителĕсем пулса ĕçлеме вĕренсе тухрĕç.

С. ИЛЬИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив служащих спецбанков извещает о преждевременной смерти главного бухгалтера Сельхозбанка

БОЙКОВА
Андрея Аристарховича

и выражает соболезнование семье покойного

Администрация Чувашской конторы Сельхозбанка и Обком Союза ФБР с глубоким прискорбием извещают о преждевременной смерти главного бухгалтера Чувашской конторы Сельхозбанка

БОЙКОВА
Андрея Аристарховича,

последовавшей 24 апреля, и выражают семье покойного соболезнование.
Похороны 26 апреля в 16 часов. Вынос тела из дома № 54 по Плехановской улице.

ИВАНОВСКОМУ ГОСУДАРСТВЕННОМУ КИРПИЧНОМУ ЗАВОДУ
ТРЕБУЮТСЯ
НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ:
гл. бухгалтера, бухгалтера, плановик.
Квартирой обеспечиваются.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 749 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: яз